Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

98-99 (7629-7630) № ✻ Шӑмат кун, 2008 ҫулхи декабрӗн (раштав) 6-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

**Фестиваль**

## Шупашкар хӑнасене йышӑнать

Кӑҫалхи декабрӗн 6–8-мӗшӗсенче Шупашкарта «Кино малых народов и регионов России (Поволжье и Урал)» ятпа Раҫҫей уҫӑ фестиваль-семинарӗ иртет. Ӑна Раҫҫей наци кино производстви 100 ҫул тултарнине халалланӑ. Фестивале йӗркелессипе пуҫаруҫӑсем шутӗнче Чӑваш Республикин Культура, национальноҫ ӗҫӗсен, информаци политикин тата архив ӗҫӗсен министерстви те.

Фестиваль «Сеспель» кинотеатрта, «Галактика» культурӑпа кану центрӗнче, Чӑваш Республикин Наци библиотекинче иртет.

**Кану кунӗсем пирки**

## Хӗллехи каникул ҫывхарать

Ҫӗнӗ ҫул уявӗсем ҫывхарнӑ май нумайӑшне кану кунӗсем канӑҫ памаҫҫӗ. Обществӑлла палатӑн ӗҫ хутшӑнӑвӗсемпе тата пенсипе тивӗҫтерес комисси ертӳҫи Олег Нетеребский декабрӗн 31-мӗшӗ уяв умӗнхи ӗҫ кунӗ пуласси не пӗлтернӗ. Апла пулсан Ӗҫ кодексӗпе килӗшӳллӗн ӗҫрен ҫынсем 1 сехет маларах кайма пултараҫҫӗ.

Ҫӗнӗ ҫулхи каникул кунӗсенче ӗҫлекенсен 10 кун канмалла, январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа 10-мӗшӗччен. Ӗҫе вара вырсарни кун, январӗн 11-мӗшӗнче, тухмалла пулать. Уяв хыҫҫӑнхи ӗҫ эрни 6 куна тӑсӑлать.

**Пурнӑҫ илемӗ – ӗҫри хастар ҫамрӑксем**

## Пуласлӑха ҫамрӑксенче куратпӑр



*Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Оксана Валерьевна Смирновапа (сулахайри) Марина Анатольевна Иванова районти паспортпа виза ӗҫӗн ҫамрӑк специалисчӗсем, хальлӗхе ятарлӑ вӑтам пӗлӳ ҫеҫ илнӗ пулсан та, пӗлӳ ҫулӗпе малаллах пӑхаҫҫӗ. Оксана, тӗслӗхрен, Чӑваш патшалӑх университечӗн юридици факультетӗнче вӗренет. Марина та ҫывӑх вӑхӑтрах аслӑ пӗлӳ паракан шкул алӑкне уҫма ӗмӗтленет. Ҫамрӑксем малалла пӑхнине ырламалла кӑна.*

*А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.*

**Ларуран**

## Районӑн 2009 ҫулхи бюджетне йышӑнчӗҫ

Депутатсен районти Пухӑвӗн черетлӗ 30-мӗш ларӑвӗ 2008 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнче район администрацийӗн ларусен залӗнче иртнӗ. Ларура пӑхса тухма кун йӗркине ҫак ыйтусене кӗртнӗ:

1. Муркаш районӗн экономикӑпа социаллӑ аталанӑвӗн 2009 ҫулхи прогнозӗ ҫинчен.
2. Муркаш районӗн 2009 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен.
3. Депутатсен районти Пухӑвӗн 2007 ҫулхи ноябрӗн 30-мӗшӗнчи С-22/3 № «Муркаш районӗн 2008 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусемпе хушӑмсем кӗртесси ҫинчен.
4. Муркаш районӗнчи муниципаллӑ служащисен выслуга ҫулӗсене кура пенси илессин йӗрки, ӑна ҫирӗплетесси тата тӳлесси ҫинчен.
5. Муркаш районӗн харпӑрлӑхӗнчи тата район территорийӗнчи патшалӑх харпӑрлӑхӗ шутланман ҫӗр участокӗсене арендӑна памалли йӗркене ҫирӗплетесси ҫинчен.
6. «Муркашри автомобильпе техника сервисӗ» уҫӑ акционер обществин пурӑнмалли ҫурчӗсене Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхне йышӑнасси ҫинчен.
7. Вырӑнти пӗлтерӗшлӗ уйрӑмах сыхлакан территорисене йӗркелесси ҫинчен.
8. Депутатсен районти Пухӑвӗн 2008 ҫулхи февралӗн 15-мӗшӗнчи С-29/6 № «Муркаш районӗн муниципаллӑ харпӑрлӑхне приватизацилемелли прогноз планӗ ҫинчен» йышӑнӑвне улшӑнусем кӗртесси ҫинчен.
9. Депутатсен районти Пухӑвӗн 2009 ҫулхи ӗҫ планне ҫирӗплетесси ҫинчен.
10. Наградa пама тӑратасси ҫинчен.

Кун йӗркине кӗртнӗ пӗрремӗш ыйтупа район администрацийӗн экономика пайӗн пуҫлӑхӗ Э.И. Симакова, иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш ыйтусемпе район администрацийӗн финанс пайӗн пуҫлӑхӗ Р.И. Ананьева, тӑваттӑмӗш, пиллӗкмӗш, улттӑмӗш, ҫиччӗмӗш, саккӑрмӗш ыйтусемпе район администрацийӗн пурлӑх тата ҫӗр хутшӑнӑвӗсен пайӗн пуҫлӑхӗ А.В. Петров тухса каланӑ.

Ҫавна палӑртмалла. Бюджет вӑл район аталанӑвне ҫитес ҫул валли палӑртса хуракан тӗп тытӑм пулса тӑрать. Районӑн бюджет прогнозне депутатсем тупӑшсем енӗпе 2009 ҫул валли 441237,7 пин тенкӗ, ял тӑрӑхӗсен бюджетне 22030,4 пин тенкӗ, пӗтӗмӗшле тупӑшсене 460350,6 пин тенкӗ чухлӗ палӑртнӑ. Тӑкаксем енӗпе район бюджечӗ 3904 пин тенкӗ е 3,7 процент чухлӗ пысӑкрах.

Юлашкинчен район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов сӑмах каланӑ. Лару ӗҫ-хӗлӗн итогӗсене пӗтӗмлетнӗ май вӑл тӗнчери кризис ыйтӑвӗсем ҫинче те чарӑнса тӑнӑ. Ҫакӑ пирӗн ӗҫ-хӗл ҫине те витӗм кӳмесӗр тӑма пултараймасси паллӑ. Йывӑрлӑхсем те пулӗҫ. Апла пулин те пӗтӗмпех хура сӑрӑпа сӑрлама, малашлӑха хӑшӗсем пек тӗпсӗр авӑрпа танлаштарма та кирлӗ мар. Пӗлсе, малаллахине курса ӗҫлесе пырсан кризис йывӑрлӑхӗсене те чӑтса иртерме пулӗ.

Лару ӗҫне Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн бюджет, налуксем, предпринимательство тата харпӑрлӑх ыйтӑвӗсемпе ӗҫлекен яланхи комиссийӗн председателӗ А.В. Щербаков та хутшӑннӑ, сӑмах каланӑ.

**ХАМӐР ИНФ.**

**Тӗнчери экономика кризисӗ пирки**

## Йывӑрлӑхсем шухӑшлаттараҫҫех

***Паян пӗтӗм тӗнчери экономика кризисӗ пирки телевизорпа та, радиопа та, хаҫат-журналсенче те ҫыраҫҫӗ-калаҫҫӗ. Пӗтӗм тӗнче пирӗнтен инҫетре темелле, анчах вӑл тӗнче пирӗнтен пуҫланмасть-и-ха? Туятпӑр-и эпир экономикӑри ҫак улшӑнусене? Ҫак ыйтусем ҫине хурав тупма районти предприяти-организацисен хӑшпӗр пуҫлӑхӗсемпе, районта пурӑнакансемпе тӗл пулса калаҫрӑм. Кашнин хуравӗ тӗрлӗрен.***

**В. КАЛИНИН, «Муркашри сӗт завочӗ» уҫӑ акционерлӑ обществӑн генеральнӑй директорӗ:**

– Пӗтӗм тӗнчери экономика кризисӗ никама та айккинче хӑвармасть, паллах. Эпир те ӑна туйма пуҫларӑмӑр. Уйрӑмах финанс енчен сисӗнет вӑл. Эпир районти пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсемпе ял ҫыннисенчен унчченхиллех сӗт илетпӗр. Ӑна тирпейлессипе те тӑхтав ҫук: производство чарӑнман. Туса кӑларнӑ продукцие вырнаҫтарассипе те пысӑк ыйтусем ҫук. Анчах пирӗнпе продукци туянассипе ӗҫленӗ предпринимательсемпе предприятисене финанс кризисӗ маларах пырса ҫапрӗ пулмалла: вӗсем туяннӑ продукцишӗн вӑхӑтра тӳлейменни палӑрма пуҫларӗ. Ҫапах эпир паян пуҫ усмастпӑр-ха.

**С. ПЕТРОВА, Мӑн Сӗнтӗрте пурӑнакан:**

– Эпӗ ҫак кризисӑн витӗмне тӳрремӗнех курмастӑп. Курманни лайӑхрах та-ши? Тен ҫакӑнта Раҫҫей Президенчӗпе Д. Медведевпа Правительство пуҫлӑхӗн В. Путинӑн ырӑ пуҫарӑвӗсем витӗмлӗ. Ҫынсене ӗҫрен кӑлараҫҫӗ тени те ял ҫыннисемшӗн мар. Кредитсем илесси паллах иккӗлентерет – кунта пытармалли ҫук.

**Ю. ПЕТРОВ, «Муркашри кирпӗч завочӗ» уҫӑ акционерлӑ общество директорӗн ҫумӗ:**

– Кризис витӗмӗ куҫ кӗрет. Ырри унран нимӗн те ҫук. Кризис ахӑр-самани строительсен укҫине «ҫисе» ячӗ пулас: вӗсем эпир кӑларакан продукцие палӑрмаллах сахал туянма пуҫларӗҫ. Ҫавна кура чӳк уйӑхӗн пӗрремӗшӗнчен эпир те кирпӗч кӑларакан пӗр кӑмакана сӳнтертӗмӗр. Ҫапах кӑҫалхи 11 уйӑхра пирӗн завод 12 миллион та 940 пин штук кирпӗч кӑларчӗ. Ку вӑл пӗлтӗрхинчен 2 миллион та 600 пин штук нумайрах. Кризис килсе ҫапнипех паян пирӗн заводра реализацилеймен кирпӗч йышланчӗ. Анчах эпир хамӑр патӑмӑрта ӗҫлекенсене октябрь-ноябрь уйӑхӗсемшӗн ӗҫ укҫи вӑхӑтрах парса татрӑмӑр.

**В. ФОМИН, Муркашра пурӑнакан:**

– Эпир те, пӗтӗм тӗнчен уйрӑлми пӗр пайӗ пулнӑран, пӗтӗм тӗнчери экономика кризисӗнчен пӑрӑнса юлаймастпӑрах. Хам ку кризиса тӳрремӗнех курмастӑп пулсан та, магазина тавар туянма кӗрсен шухӑшлатӑп: кирлех-и паян ку тавар? Хулара пурӑнакан тӑвансен ӗҫ вырӑнӗсене «кӗскетни» шухӑшлаттарать. Кун пек ҫулпа кайсан вӗсен унчченрех илнӗ кредитсене епле тӳлесе татмалла? Ӗҫ вырӑнӗсене «кӗскетнипе» пӗрлех паянхи ӗҫченсене пӗтӗм тӗнчери экономика кризисӗпе витӗнсе ӗҫрен кӑларса вӗсен вырӑнне хӑйсен тӑванӗсене вырнаҫтарасси пурнӑҫа кӗрсе пыни сисӗнет.

**Анатолий БЕЛОВ калаҫнӑ.**

**Килсе курӑр**

## Музейра – ҫӗнӗ выставка

Ӗнер районти историпе краеведени музейӗнче Чӑваш Республикинчи паллӑ сӑвӑҫӑн, юрӑҫӑн Светлана Асаматӑн куравӗ уҫӑлчӗ. Курава уҫма автор хӑй те килчӗ.

Район ҫыннисен музейра Асамат пурнӑҫӗпе, ӗҫӗ-хӗлӗпе тӗплӗн паллашма май пур. Унӑн кӗнекисем, юрӑ дискӗсем, тӗррисем, концертсенчи тумӗсем, ӑна ют ҫӗр-шывсенче парнеленӗ сувенирсем, сӑн ӳкерчӗксем тата ытти нумай япаласем курава пуянлатаҫҫӗ. Светлана Асамат хӑйӗн ҫемйи ҫинчен те, ӗҫ картлашки пирки калакан экспонатсем те сахал мар хатӗрленӗ. Шкул ачисемпе вӗренекенсемшӗн, культура ӗҫченӗсемшӗн курав уйрӑмах интереслӗ пулӗ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Юбилей**

## Саламлатпӑр



Хаклӑран та хаклӑ тӑванӑмӑра, Кашмаш ялӗнче пурӑнакан **Людмила Александровна ВАСИЛЬЕВАНА** 75 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн саламлатпӑр, ырлӑх-сывлӑх, телей сунатпӑр. Тавтапуҫ сана пуриншӗн те.

**Саламлаканӗсем: тӑванӗсем, пускилсем тата мӑнукӗсем.**



Юратнӑ мӑшӑра, аттене, кукаҫине, кӗрӗве, йыснана, шӑллӑма, ҫывӑх тӑвана – Мӑн Токшик ялӗнче пурӑнакан **Александр Федорович ФЕДОРОВА** 60 ҫулхи юбилейпа саламлатпӑр. Пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗпе шанчӑклӑ утма ҫирӗп сывлӑх, пархатарлӑ кун-ҫул, ҫӑл куҫ пек тапса тӑракан вӑй-хал, тулли телей сунатпӑр. Ҫутӑ ӗмӗтӳсем пурнӑҫпа пӗр килччӗр, ӗҫӳ ӑнса пытӑр. Ҫемье вучахӗ тикӗссӗн те хӗрӳллӗн ялкӑштӑр, ӑшшипе пире хӑй патне турттӑр.

**Салампа юратнӑ мӑшӑрӗ, 4 хӗрӗпе ывӑлӗ, кӗрӗвӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

**Граждансене йышӑнаҫҫӗ**

### «Единая Россия» партин Муркаш районӗнчи уйрӑмӗн обществӑлла йышӑну пӳлӗмӗнче граждансене декабрь уйӑхӗнче йышӑнмалли график

| Хӑш кун | Йышӑнмалли вӑхӑт | Кам йышӑнать |
|---|---|---|
| Декабрӗн 9-мӗшӗ | 10–14 сех. | А.Н. ИВАНОВ, политканаш секретарӗ, РФ Патшалӑх Думин депутачӗн Н.М. Бударинӑн пулӑшаканӗ |
| Декабрӗн 11-мӗшӗ | 10–14 сех. | В.Г. ДАНИЛОВ, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ, политканаш членӗ |
| Декабрӗн 16-мӗшӗ | 10–14 сех. | В.А. МОРОЗОВ, Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн депутачӗ |
| Декабрӗн 18-мӗшӗ | 10–14 сех. | Н.П. ПЕТРОВА, политканаш секретарӗн ҫумӗ |
| Декабрӗн 23-мӗшӗ | 10–14 сех. | А.Ф. КОРНЕЕВА, ӗҫтӑвком ертӳҫи, политканаш членӗ |
| Декабрӗн 25-мӗшӗ | 10–14 сех. | И.В. НИКОЛАЕВ, политканаш членӗ, депутатсен районти Пухӑвӗн председателӗ |

**Ҫырӑнтару – 2009**

**Районти «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2009 ҫулхи пӗрремӗш ҫур ҫулта илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫӗ. Ултӑ уйӑха ҫырӑнса илмелли хак – 191 тенкӗ 70 пус.**

**Хаклӑ вулаканӑм, район хыпарҫисӗр ан юлӑр. Ҫитес ҫул та пӗрле пулар!**